*1992 çулхи апрелĕн 29-мĕшĕнче Чăваш Енĕн Аслă Канашĕ ЧР Патшалăх гимнĕ, гербĕ тата ялавĕ çинчен постановлени йышăннă. Кăçал унтанпа 20 çул — хăйне май пĕчĕк юбилей.*

Ю. ДУБРОВ,
Э. Юрьев ячĕллĕ музей ертÿçи

# Чăваш патшалăх символĕсем


Элли Юрьев
художник

ЧР Патшалăх гербĕпе ялавĕ Чăваш патшалăхĕпе унăн суверенитечĕн символĕсем пулса тăраççĕ.

Герб çине геральдика щичĕ ÿкернĕ, унта эпир чăваш çĕрĕнчен ÿссе хăпарнă "Пурнăç йывăçне" куратпăр. "Пурнăç йывăçĕ" (Çĕнелсе вăй илнин символĕ) — чăваш халăхĕн ĕмĕрсем хушши утса тухнă вăрăм çулĕ.

Йывăçпа геральдика щичĕн аялти пайĕн тĕксĕм хĕрлĕ тĕсĕ халăх мĕн авалтанпах ирĕклĕх çĕнсе илмешкĕн тăрăшнине пĕлтерет, çак ăнтăлу вара ăна пуян йăли-йĕркипе хăйне евĕрлĕхне сыхласа хăварма пулăшнă.

Çутă сарă тĕс вăл — Хĕвел çутин тĕсĕ, Хĕвел вара çĕр çинче мĕн пуррине пĕтĕмпех пурнăç парнелет. Чăваш халăхĕ сарă тĕсе мĕн ĕлĕкрен мĕн пур тĕссенчен чи пахи тесе шутланă.

Геральдика щичĕн тăрринче — сакăр кĕтеслĕ виçĕ çăлтăр. Сакăр кĕтеслĕ çăлтăр — чăваш тĕррин чи анлă сарăлнă элеменчĕ. Вăл илемлĕхпе хăтлăха пĕлтерет.

Щита ылтăн саспаллисемпе "Чăваш Республики — Чувашская Республика" тесе çырнă хăюпа тытса çавăрнă. Лента вĕçĕнче ÿкерсе хунă хăмла — чăваш халăхĕпе Республика туса илнĕ пуянлăхăн — "симĕс ылтăнăн" сăнарĕ.

ЧР Патшалăх ялавĕ — тăватă кĕтеслĕ пусма, унăн енĕсем 5:8 виçепе шайлашуллă. Ялава сарă (çÿлти ен) тата хĕп-хĕрлĕ (аял ен) тĕссене пайланă. Чăваш фольклорĕнче сарă тĕс мĕн пур лайăххине, ыррине сăнарлать. Геральдикăра ылтăн пуянлăха, тĕрĕслĕхе, ыр кăмăллăха, хĕрхенĕве, çирĕплĕхе, вăй-хала, шанчăклăха ăнлантарать. Хĕп-хĕрлĕ тĕс тивĕçлĕхе, вăйхăвата, хăюлăха пĕлтерет.

Чăваш Патшалăх ялавĕнче эпир Патшалăх гербĕн тĕп эмблемине — "Пурнăç йывăççи" куратпăр, вăл çавăн пекех Чăваш патшалăхĕ ÿссе çирĕпленнине, унăн пуласлăхне пĕлтерет. Йывăç кунта та сакăр кĕтеслĕ виçĕ çăлтăрпа тăрăланать. Виçĕ çăлтăр, Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай калашле, "Эпир

пулнă, пур, пулатпăр" те...
те йăнăш пулмĕччĕ. Ç...
шухăша Э. Юрьев та çи...
плетсе калатчĕ.

Патшалăх гербĕ...
ялавĕн авторĕ — Чăва...
Енĕн халăх художникĕ, Ш...
пашкар хулин хисеплĕ гра...
данинĕ, Пĕтĕм Раççейри ге...
ральдика обществин хи...
сеплĕ членĕ, Чăваш Па...
шалăх премийĕн лауреа...
ЧР инженерипе техноло...
академийĕн академикĕ Э.
М. Юрьев.

ЧР Патшалăх Гим...
сăнарсен виçĕ çаврă...
пĕлтерет: çут çанталăк çĕ...
пурнăçа сиссе чĕрĕлни...
çемьене — тăвансене, ат...
пе аннене, ачасене; "Чăва...
тĕнчине" пур тăван...
пĕрлешсе килĕшÿллĕ пу...
ннине. Гимнăн кĕвви...
сăмахĕсем чăваш халăх...
рине питех те çывăх, ан...
çав вăхăтрах вĕсем хал...
пурнăçа та пĕлтереççĕ.

Халăх йышăнма...
çакăн пек сăмахсене И...
Тукташ поэт-лирик ...
çырма пултарнă ик...
Унăн сăмахĕсем т...
чăвашсен паллă ком...
торĕ Герман Лебедев ...
хывнă.